Муркаш округӗн территори пайӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ

# Йӳҫкасси территори пайӗ

## *Актай, Тури Панкли, Вӑрманкасси, Илпеш, Анатри Панкли, Ҫӗн Матьӑк, Нӳрет, Патаккасси, Раккаш, Кив Матьӑк, Ҫӗмӗрткасси, Хурӑнкасси, Йӳҫкасси ялӗсем*

# «Мӗн туни – пӗтӗмпех хамӑр ял ҫыннисем валли»



Ача садне – ҫӗнӗрен сарнӑ тротуарпа.



Ҫӗн Матьӑк ялӗнче пурӑнакансем пӗвене пуҫарулӑх бюджечӗн мелӗпе юсанӑ.



Илпешри шыв башнине 2023 ҫулта республика программине хутшӑнса ҫӗнетнӗ.



Вӑрманкасси урамӗнче те халӗ вак чул сарнӑ йӗркеллӗ ҫул пур.

***Ҫапла пӗтӗмлетсе каларӗ хамӑрӑн калаҫу вӗҫӗнче Муркаш муниципалитет округӗн Йӳҫкасси территори пайӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑх пурнӑҫлакан Инна Ефимова.***

***Ял пурнӑҫӗ, кунта пурӑнакансен кулленхи ыйтӑвӗсем уншӑн пӗлмен-туман япала мар. Вӑл кунта 14 ҫул тӑрӑшать.***

***Паллӑ ӗнтӗ, ял ҫыннисене канӑҫ паман ыйтусем, вӑл шутрах тӗрлӗрен проблема та яланах пулнӑ, малашне те вӗсем пулаҫҫех. Нимӗн тума та май ҫук. Апла пулин те юлашки ҫулсенче ҫынсен пурнӑҫӗнче пулса иртекен ырӑ улшӑнусене курмасӑр та пултараймастпӑр. Ҫынсене чылай ҫул калаҫтарнӑ ыйтусене те чиперех татса пама май килет.***

***Раҫҫей Президенчӗн Владимир Путинӑн указне тӗпе хурса ҫӗршыв шайӗнче пурнӑҫа кӗрекен наци проекчӗсем, республика шайӗнчи тӗрлӗрен программӑсемпе проектсем, муниципалитет программисем ку тӗлӗшпе пысӑк тӗкӗ пулса тӑраҫҫӗ.***

***Шӑпах юлашки ҫулсенче туса ирттерме май килнӗ пӗлтерӗшлӗ ҫак ӗҫсем, татса пама пултарнӑ ыйтусем пирки каласа пама ыйтрӑм та ӗнтӗ территори пайӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑх пурнӑҫлакан Инна Ефимовӑна:***

***– Калаҫу пуҫламӑшӗнче ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗнче нумай ҫул ӗҫленӗ Анатолий Николаевич Кузьмин пултаруллӑ ертӳҫӗ пулнине, Йӳҫкасси тӑрӑхӗшӗн чунне парса ӗҫленине палӑртса хӑварас килет. Шел, пурнӑҫран вӑхӑтсӑр уйӑрӑлса кайрӗ. Ял ҫыннисем ӑна ырӑпа аса илеҫҫӗ. Унӑн ҫутӑ сӑнарӗ пирӗн чӗрере ялан упранӗ.***

***Пурнӑҫ малалла каять, халӗ пирӗн ӗҫсем патне тавӑрнар.***

Сӑмаха республикӑра 2017 ҫултанпа пурнӑҫа кӗрекен пуҫарулӑх бюджечӗн программинчен пуҫланӑ пулӑттӑм. Шӑпах вӑл паянхи куна ял ҫыннишӗн чӑннипех те халӑх программи пулса тӑчӗ. Тӗрӗссипе унӑн шайӗнче паян ял ҫыннине канӑҫ паман кирек епле ыйтӑва та тенӗ пекех татса пама май пур. Ҫитменнине ыйтӑва татса парасси темиҫе ҫула тӑсӑлмасть.

Пӗлтерӗшлӗ тепӗр самант – вырӑнта мӗнле ӗҫ туса ирттересси «ҫӳлтен» хушнипе-кӑтартнипе пулса пымасть, ҫынсем хӑйсемшӗн мӗн кирлӗреххине, мӗнле ыйтӑва татса парассине хӑйсем палӑртаҫҫӗ, ҫак ӗҫе хӑйсем те тӳпе хываҫҫӗ.

Акӑ иртнӗ ҫулсенче пирӗн территорири ялсенче пушарсем тӑтӑшах пулкаларӗҫ. Ҫавна шута илсе юхӑнса кайнӑ, юшкӑнпа тулса ларнӑ, татса кайнӑ пӗвесене тасатса йӗркене кӗртессипе, пӗве патне пушар машинипе пымалла тӑвассипе ҫине тӑрса ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр. Шӑпах пуҫарулӑх бюджечӗн мелӗпе татса паратпӑр ыйтӑва. Кашни ҫулах ҫапла майпа 2 – 3 объектра е ытларах та ӗҫсем туса иртерме тӑрӑшатпӑр.

Проектсен шучӗ те, вӗсен хакӗсем те ӳссе пыраҫҫӗ. Акӑ 2021 ҫулта пуҫарулӑх бюджечӗн проекчӗсене 4 пурнӑҫа кӗртнӗччӗ. Ун чухне ҫапла майпа Вӑрманкассинче тата Тури Панклире ача-пӑча вӑйӑ тата спорт площадкисем йӗркелеме, Ҫӗмӗрткасси ялӗнчи Лесная урамра вак чул сарса ҫула юсама, Йӳҫкасси ялӗнчи Центральная урамри пӗвене тасатса пушар машинипе шыв илмелле тума май килнӗччӗ.

2022 ҫулта кун пек ӗҫсене харӑсах 6 объектра туса ирттертӗмӗр. Ку ҫулхине пӗвесене тасатса пушар машинипе шыв илмелли вырӑнсем 4 ялта йӗркелерӗмӗр: Актайра, Кив Матьӑкра, Ҫӗмӗрткассинчи Лесная урамра тата Хурӑнкассинчи Восточная урамра. Кунпа пӗрлех ҫынсем хӑйсем тӑрӑшнипе, пуҫаруллӑ пулнипе икӗ ял урамӗнче ҫул ыйтӑвне татса пама пултартӑмӑр. Ҫапла вара вак чул сарса ҫулсене Патаккасси ялӗнчи Патаккасси урамӗнче тата Вӑрманкассинчи Советская урамра йӗркене кӗртме май килчӗ.

2023 ҫулта та ялсенче пурӑнакансем пуҫарулӑх мелӗпе пӗвесене тасатса- юсаса йӗркене кӗртессине маҳӑҫа кӑларас темерӗҫ. Пӗлтӗр кун пек ӗҫсене тӑватӑ объектра туса ирттертӗмӗр. Паянхи куна Кив Матьӑкри Тарасов урамӗнче, Ҫӗн Матьӑкри Южная тата Зеленая урамсенче, Хурӑнкассинчи Солнечная урамра тасатса йӗркене кӗртнӗ пӗвесем пур ӗнтӗ. Ҫу кунӗсенче вӗсенчен пушар машинипе шыв илесси те проблемӑллӑ мар. Пуҫарулӑх бюджечӗн тепӗр проекчӗпе вара Вӑрманкасси ялӗнчи Центральная урам хушшинчи 600 метр тӑршшӗ ҫула вак чул сарса юсаса йӗркене кӗртме май килчӗ.

Пушартан сыхланассипех шыв илме пушар пирсӗсем тӑвассипе те иртнӗ ҫул ҫине тӑрсах тимлерӗмӗр. Ҫапла вара кун пек пирссене Ҫӗмӗрткассинче, Кив Матьӑкра, Йӳҫкассинче, Актайра, Патаккассинче, Анатри Панклире, Хурӑнкассинче туса патӑмӑр. Кӑҫал пушар пирсӗсем Тури Панклире тата Вӑрманкассинче тума палӑртатпӑр.

Сӑмах май, кӑҫал пурнӑҫа кӗртме республика конкурсне эпир ултӑ проект тӑратнӑччӗ. Вӗсем пурте конкурс тӗрӗслевӗ витӗр тухрӗҫ. Виҫӗ проектпа пӗвесене тасатса йӗркене кӗртмелле пулать. Сӑмах Ҫӗмӗрткасси ялӗнчи Водопроводная урамри, Ҫӗн Матьӑкри Зеленая урамри, Хурӑнкассинчи Восточная урамри пӗвесем пирки пырать. Ҫавӑн пекех Хурӑнкассинчи Восточная урамри автомобиль ҫулне 400 метр, Тури Панклири Западная урам ҫулне 500 метр юсаса йӗркене кӗртес тетпӗр. Анатри Панкли ялӗнче пурӑнакансем вара ялти шыв пӑрӑхӗсен сетьне юсаса ҫӗнетес шухӑшлӑ пулчӗҫ. Проектӑн смета хакӗ 5,8 миллион тенкӗ ытла. Кирлӗ суммӑран 3,5 миллион тенкине республика уйӑрать, ял ҫыннисен хӑйсен тӳпи 750 пин тенкӗпе танлашать, 1,6 миллион тенкӗне яхӑн – вырӑнти бюджетран.

Ӗҫмелли шыв, ҫул ыйтӑвӗсем ял ҫыннишӗн яланах пӗлтерӗшлисен шутӗнче пулнӑ. Ку халӗ те ҫаплах. Чылай ҫӗрте шыв уҫламалли башньӑсем, шыв пӑрӑхӗсем кивелсе ҫитнӗ. Вӗсене вӗҫӗм юсанипе те усси нумаях мар. Ҫавна май Чӑваш Республикин «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалӑх программин «Модернизация коммунальной инфраструктуры на территории Чувашской Республики» хушма программи пирӗншӗн пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Асӑннӑ хушма программа пурнӑҫа кӗме тытӑнсан пирӗн тӑрӑхра та улшӑнусем пулса иртме пуҫларӗҫ. Ку программа чи малтанах шыв скважинисене, шыв башнисене ҫӗнетессипе пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Унта хутшӑнса 2023 ҫулта харӑсах 6 ялта – Актай, Илпеш, Патаккасси, Хурӑнкасси, Анатри Панкли, Тури Панкли ялӗсенче шыв башнисене ҫӗнетме пултартӑмӑр.

Кунсӑр пуҫне тата Муркаш районӗ ун чухне республика конкурсне хутшӑнса грант ҫӗнсе илнӗччӗ. Район администрацийӗ грант укҫи-тенкипе Йӳҫкасси ял тӑрӑхне те тивӗҫтерчӗ. Ҫапла вара ку укҫа-тенкӗпе явӑҫтарса Йӳҫкассинче тата Вӑрманкассинче те шыв уҫламалли башньӑсене ҫӗнетме пултартӑмӑр.

Ял пурнӑҫне хӑтлӑрах та меллӗрех тума республика шайӗнче туса хатӗрленӗ программӑсем татах ҫук мар. Акӑ Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин территорийӗнче хальхи хула тӑрӑхӗ йӗркелесси» патшалӑх программине хутшӑнса пирӗн патра та 2022 ҫулта хӑтлӑх ӗҫӗсем туса иртерме май килчӗ. Унӑн шайӗнче республика уйӑрса панӑ 2 миллион ҫурӑна яхӑн тенкӗпе Йӳҫкассинче ача сачӗ, больница, 27 хваттерлӗ ҫурт патне пыма тротуар сарма, кану вырӑнӗ йӗркелеме, ҫутӑ хунарӗсем, тенкелсем вырнаҫтарма май килчӗ. Халӗ кунта питӗ хӑтлӑ та меллӗ.

Паллӑ ӗнтӗ, территори пайӗн ӗҫӗ-хӗлӗ вӑл – пӗрлехи ӗҫ. Пурте пӗрле тӑрӑшмасӑр нимӗн те пулмасть. Ҫавна май ыттисене хавхалантарма, ертсе пыма пултаракан активистсем пулни те паянхи куншӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Кун пеккисем вара пирӗн тӑрӑхра ҫук мар. Ҫавӑн пек пуҫаруллӑ та хастар пулнӑшӑн чи малтанах Хурӑнкасси ялӗн старостине Владимир Алексеева, Кив Матьӑк ялӗн старостине Леонид Никитина, Ҫӗн Матьӑк ялӗн активистне Алексей Владимирова, Патаккасси ялӗн активистне Лев Павлова тав сӑмахӗ каланӑ пулӑттӑм.

Пирӗн тӑрӑхра усӑ курмасӑр пушӑ выртакан ҫӗр участокӗсем ҫук. Вырӑнти «Ударник» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ хамӑр патри ҫӗрсемпе тухӑҫлӑ усӑ курса производствӑна аталантарса пырать, ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерет ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех Йӗпреҫ, Улатӑр, Канаш муниципалитет округӗсенче те арендӑна илнӗ ҫӗрсем ҫинче тырӑ-пулӑ туса илет.

Культура, спорт пурнӑҫӗ пирӗн тӑрӑхра ҫӳллӗ шайра. Территорире 3 клуб учрежденийӗ. Йӳҫкассинчи Культура ҫурчӗ 2022 ҫулта республика конкурсне хутшӑнса «Чи лайӑх Культура ҫурчӗ» ята тивӗҫме пултарчӗ. Кунти «Сипет» халӑх театрне, «Саваяр» художество пултарулӑх коллективне округра пурӑнакансенчен чылайӑшӗ лайӑх пӗлет.

Тӗрлӗ енпе спорт ӑмӑртӑвӗсем ирттересси йӑлара. Футбол, волейбол енӗпе территори пайӗн пуҫлӑхӗн парнисене ҫӗнсе илессишӗн спартакиадӑсем ҫулленех ирттеретпӗр. Хӗрарӑмсен командисем вара ҫулсерен мартӑн 8-мӗшӗнче савӑнӑҫлӑ стартсенче вӑй виҫеҫҫӗ. Александр Ермолаева асӑнса шашка турнирӗ ирттересси те йӑлана кӗчӗ. Ытти ӑмӑртусем те активлӑ та ҫӳллӗ шайра, пысӑк йышпа иртеҫҫӗ.

Ятарлӑ ҫар операцийӗ пынӑ май, унта хутшӑнакансене пулӑшассинчен те пирӗн тӑрӑхра пурӑнакансем айккинче юлмаҫҫӗ. Ҫар операцийӗ пынӑ ҫӗре ӑсатма Йӳҫкассинчи Культура ҫуртӗнче гуманитари пулӑшӑвӗ пухмалли пункт та йӗркелерӗмӗр. Май килнипе хамӑрӑн салтаксене пулӑшма тӑрӑшакан сахал мар.

Хамӑрӑн ҫывӑх малашлӑх тӗллевӗ пирки те асӑнса хӑварам. Халӗ пирӗн патра ирӗклӗ пушар команди йӗркеленӗ. 2023 ҫултанпа пушар машини те пур. Автомашина валли хутса ӑшӑтакан гараж тупассин ыйтӑвӗ тӑрать. Хыҫҫӑн вара пушар хуралӗн ятарлӑ постне те йӗркелеме май килӗ тесе шухӑшлатӑп. Пӗр сӑмахпа, пурнӑҫ пӗр вырӑнта тӑмасть, малаллах аталанать тесе паян ҫирӗплетсех калама пулать.

Кӑларӑма
Владислав ШАПОШНИКОВ
хатӗрленӗ.